Пурнăçа, çĕршыва юрат, тăван халăх мĕнпе чĕрĕ, çавна юрат!

# ТУСЛĂХ

НУРЛАТ РАЙОНĔН ОБЩЕСТВĂПА ПОЛИТИКА ХАÇАЧĔ
ОБЩЕСТВЕННО-ПОЛИТИЧЕСКАЯ ГАЗЕТА НУРЛАТСКОГО РАЙОНА

*Хаçат 1931 çулхи июлĕн 9-мĕшĕнче тухма пуçланă.* N 87 (4656) *1998 çулхи август (çурла) уйăхĕн 1-мĕшĕ, шăматкун* *Палăртнă хакпа.*

## Августăн 2-мĕшĕ - Чугун çул ĕçченĕсен кунĕ

*Надежда Георгиевна Лобачева чугун çул çинче ĕçлессине çирĕм çул ытла халалланă. Вăл станци дежурнăйĕ, унăн ĕçĕ питĕ яваплă: Надежда Георгиевна поездсем çӳрессине йĕркелесе тăрать, хăйĕн тивĕçĕсене ăнăçлă пурнăçлать.*

*Н. Азизов сăнӳкерчĕкĕ.*

**Чугун çул ĕçченĕсен çивĕч ыйтăвĕсемпе ĕçĕ-хĕлне халалланă материалсене хаçатăн 2-мĕш страницинче вулăр.**



## Районти канашлу

Июлĕн 30-мĕшĕнче, кĕçнерникун, район администрацийĕнче хресченсен хуçалăхĕсен тата хресченсемпе фермерсен хуçалăхĕсен ассоциацийĕсен, агропромышленность комплексĕн предприятийĕсен, промышленноçпа транспорт, строительство тата ытти отрасльсен ертӳçисем, администраци пуçлăхĕн аппарачĕн, халăх депутачĕсен пĕрлештернĕ Совечĕн, ял хуçалăхĕпе апат-çимĕç управленийĕн яваплă ĕçченĕсем хутшăннипе канашлу иртнĕ. Пирĕн паянхи пысăк пĕлтерĕшлĕ те вăраха тăсмасăр пурнăçламалли задачăсене палăртмалла - çак шухăш тĕп вырăн йышăнчĕ администраци пуçлăхĕн Ф.С.Сибгатуллинăн сăмахĕнче. Малтан вăл пуçтарăннисене июлĕн 27-мĕшĕнче Хусанта пулнă республика канашлăвĕн итогĕсемпе тата ТР Президенчĕ М.Ш.Шаймиев тухса калаçнипе тĕплĕн паллаштарчĕ.

Унтан районта тырпула пухса илессине тата пĕтĕмĕшле ял хуçалăхĕнче ĕçсем мĕнле пынине тишкерсе тухрĕ. Çу кунĕ вăрăм пулин те, кулленхи ĕç-хĕл çинчен манни хуçалăхсемшĕн хакла ларĕ. Тырçи ĕçĕсене ăнăçлă вĕçлесси тĕп вырăнта тăрать, тесе палăртрĕ Ф.С.Сибагатуллин. Кăçалхи типĕ çанталăк пуян тухăç ӳстерме кансĕрлерĕ пулин те, уй-хирсенче çитĕнтернине кĕске вăхăтра тата тăккаламасăр пухса кĕртмелле. Вырма ĕçĕсен пĕрре виççĕмĕш пайне пурнăçланă. Тырпула элеватора турттарма мĕнпур техникăна явăçтармалла, ку енĕпе хулари предприятисен ертӳçисем çирĕп хушу илчĕç. Мĕнле йывăр пулсан та, хуçалăхсенче çине тăрса тăрăшмалла тата çунтармалли-сĕрмелли материалсемшĕн тавар кредичĕсене тулăпа тата урпапа тӳлесе татас тĕлĕшпе хăйсен договор обязательствисене пурнăçламалла, çакăн çинчен те ассоциацисен ертӳçисене аса илтерчĕç. Такам перекетлĕх çинчен манса, топливăна тĕлсĕр тăкакланă. Парăма вара пĕтĕмпех тӳлесе татма тивĕ, апла пулсан, хуçалăхсен членĕсене тырăпа тӳлессин калăпăшне чакарма тӳр килĕ. Çитес çулхи тухăçăн шанчăклă никĕсне хывасси çинчен те манмалла мар. Ку енĕпе июнь уйăхĕн пуçламăшĕнче ассоциацисен ертӳçисене çĕртме тума тракторсене хатĕрлеме хушнă, анчах та çакăн çинчен пурте тенĕ пекех астумаççĕ çав. Тракторсенчен ытларахăшĕ юсавра, пуррисемпе вара икĕ сменăпа мар, пĕррепе усă кураççĕ. Августăн 5-мĕшĕ хыççăн кĕрхи культурăсене акма тытăнмалла, сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне çĕртме тума палăртнă анасене сухаласа пĕтермелле. Кăçал кĕрхи культурăсене пысăк тимлĕх уйăрĕç.

Канашлура çаплах сĕт-çу ыйтăвне хускатрĕç. Çуллахи лагерьсенче халлĕхе ĕçсем лайăх-ха, сĕт суса илесси чакмасть, ӳсет, çапла майпа ял çыннисен "чĕрĕ" укçа пулĕ. Шел пулин те, юлашки вăхăтра хăш-пĕр хуçалăхсенче сĕт сахал суса илеççĕ, администраци пуçлăхĕ вĕсенчен хăшне-пĕрне ятран асăнчĕ. Кусем вĕсем: Хафизов ячĕпе хисепленекен, М.Джалиль ячĕпе хисепленекен, "Алга", "Комбайн", "Кондурча", "Рассвет", "Восход", "Заветы Ильича" тата ытти ассоциацисем. Юлашкинче ассоциаци членĕсене иртнĕ çултанпах ĕç укçи параманни çинчен те каласа хăвармалла. Сĕт ытларах суса илес тесе мĕнле тăрăшмалла мар-ха? Кăçал çанталăк питĕ типĕ пулнă май выльăх-чĕрлĕх валли паха сенаж тата силос ытларах хатĕрлесе хăварассишĕн тăрăшмалла. Выльăхсем хĕлле тутă пулччăр тесен çине тăрса вăй хумалла.

Канашлура ытти актуаллă ыйтусене те сӳтсе яврĕç. Сăмахран, бюджета тӳлевсем туллинрех кĕрессине, пенси тата бюджет учрежденийĕсенче ĕçлекенсене ĕç укçи вăхăтлă парассине тивĕçтерессине.

## Тырçи паттăрĕсем

Хресченсен хуçалăхĕсен Муса Джалиль ячĕпе хисепленекен ассоциацийĕнчи **Марат Хасаншович ГАТИН** паккуссенчи тырра çапма тытăннă пĕрремĕш кунах смена нормине 222 процент пурнăçланă.

Çав хуçалăхри **Камиль Хасыбуллович САЛАХОВ** тырă çапнă çĕрте, **Гумер Хоббуллович ЗАЙДУЛЛИН** пăрçа çулнă çĕрте смена нормисене 125-шер процент пурнăçлаççĕ.

* * *

"Киклĕре" К-701 тракторпа çĕртме сухалакан **Салават Азатович АХМЕТОВ** смена нормине 167 процент тултарнă.

Çак хуçалăхри **Ришат Хаметсафович ФАСХУТДИНОВ** пăрçа çулнă çĕрте смена нормине 125 процент пурнăçлать, **Рамис Ахметвалеевич САФИН** вара - 135 процент.

* * *

Синдряков ячĕпе хисепленекен ассоциацири **Андрей Валентинович РОДИОНОВ** "Нива" комбайн çумне ЖВН-6 çаклатса кĕрхи культурăсене çулнă çĕрте нормăна 120 процент тултарнă, пурĕ вара ĕçе 230 гектар çинче пурнăçланă.

* * *

Кооперативсен Мичурин ячĕпе хисепленекен пĕрлешĕвĕнчи **Станислав Валериянович НИКОЛАЕВ** "Нива" комбайнăн бункерĕнчен пин центнер тырă пушатнă.

## "Тухăç-98" пресс-центр пĕлтерет

**Кооперативсен Мичурин ячĕпе хисепленекен пĕрлешĕвĕнче, хресченсен хуçалăхĕсен Кузнецов ячĕпе хисепленекен, Синдряков ячĕпе хисепленекен, Хафизов ячĕпе хисепленекен ассоциацийĕсенче, кĕрхи культурăсен лаптăкĕсем чи нумайăшсенче, тырпула çулнă хыççăн тӳрех çапаççĕ, "Рассвет", "Татарстан", "Урняк", "Черемшан", "Алга" хуçалăхсенче те ку ĕçри уйрăмлăх пысăк мар. Юлашки вуçĕ ассоциацире тата РСУ хушма хуçалăхĕнче, çаплах "Комбайн", "Чулпан" хуçалăхсенче юлашки виçĕ-тăватă кун хушшинче тырпул пухса кĕртес ĕçсем пысăк хăвăртлăхпа пыраççĕ.**

**"Кондурча", Хафизов ячĕпе хисепленекен, Кузнецов ячĕпе хисепленекен, Мичурин ячĕпе хисепленекен, "Сĕнче", "Урняк" ассоциацисенче халлĕхе ыраш тухăçĕ лайăх-ха, "Сĕнче", "Кондурча", "Черемшан" хуçалăхсенче вара - кĕрхи туллăн. Сахăр завочĕн хушма хуçалăхĕнче, "Комбайн", "Тан", "Урняк", "Сĕнче" ассоциацисенче кĕрхи культурăсем акма тăпра хатĕрлеççĕ, хатĕр лаптăксем палăртнин çурри ытла шутланаççĕ ĕнтĕ. Çак ĕçе "Заря" ассоциацире, сĕт-çу комбиначĕн хушма хуçалăхĕнче тăрăшса пурнăçлаççĕ. Анчах та хресченсен хуçалăхĕсен Муса Джалиль ячĕпе хисепленекен, Синдряков ячĕпе хисепленекен, "Черемшан", "Чулпан" ассоциацийĕсенче, РСУ хушма хуçалăхĕнче хатĕр лаптăксем малтанхи пекех сахал-ха. Районта кĕрхи культурăсем акма палăртнă лаптăксен çуррине яхăн хатĕр шутланать.**

**"Кондурча" тата "Дуслык" хуçалăхсем хĕле валли выльăх апачĕн чи пысăк запасне тивĕçтернĕ. Кунта пĕр условнăй выльăх пуçне 12,6-13,6 центнер апат единици хатĕрленĕ. "Заряра" çак кăтарту 10 центнер шутланать, "Родина" ассоциацире тата "Агрохимсервисăн" хушма хуçалăхĕнче - 8-шар центнер. Юлашки хуçалăхра кооперативсем пĕрле ĕçленипе 3-4 кун хушшинче сенаж запасĕ икĕ хут ӳснĕ, "Дуслык" хуçалăхра та сенаж хывасси пысăк хăвăртлăхпа пырать, кунта часах çулталăка кирлĕ чухлĕ хывĕç. "Кондурчан" та çак палла çитме нумаях юлман.**

**"Заря" хуçалăхра сенажа кирлин çуррине яхăн хатĕрленĕ. Юлашки кунсенче çакăн йышши выльăх апатне хатĕрлессин хăвăртлăхне "Урняк", "Тĕрнеç" ассоциацисенче ӳстернĕ.**

**Хресченсен хуçалăхĕсен Хафизов ячĕпе хисепленекен, "Игенче", "Заветы Ильича" ассоциацийĕсенче, РСУ, сахăр завочĕн тата сĕт-çу комбиначĕн хушма хуçалăхсенче пĕр условнăй выльăх пуçне чи сахал апат хатĕрленĕ - пурĕ те 3,2-3,7 центнер.**

## "Сельхозтехникăра" - çĕнĕ ертӳçĕ

Кĕçнерникун "Сельхозтехника" акционер обществин пĕрлехи пухăвĕ пулчĕ.

Пуху М.Ю.Жемковăн заявленине тĕпе хурса, ăна обществăн генеральнăй директорĕн тивĕçĕсенчен хăтарчĕ.

Генеральнăй директор пулма Ахмет Валиахметович Мулюкова суйларĕç.

Пухăва район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ Ф.М.Давлетшин тата администраци аппарачĕн ертӳçин тивĕçĕсене пурнăçлакан Ф.М.Галимов хутшăнчĕ. Вĕсем предприяти умĕнчи кăткăс та яваплă задачăсем çинче чарăнса тăчĕç, ĕçе çĕнĕлле йĕркелесе ямаллине, коллектив ыйтăвĕсене район ертӳçисем тимлĕх уйăрĕç тесе палăртрĕç.



# Л.Н.Газизуллина: "Чугун çул - экономика нерви"

**Пирĕн хула чугун çултан, тĕрĕсрех каласан, Нурлат станцийĕнчен пуçланать. Апла пулсан, Нурлатра пĕрремĕш професси представителĕсем - чугун çул ĕçченĕсем яланах уйрăм тимлĕхе, хисепе тивĕçлĕ. Йăлана кĕнĕ тăрăх, август уйăхĕн пĕрремĕш вырсарникунĕнче вĕсем хăйсен професси уявне пуллă тăваççĕ. Çавна тĕпе хурса эпир Нурлатри чугун çул станцийĕн начальникĕпе тĕл пулса станцири хальхи вăхăтри ĕçсемпе кăсăклантăмăр.**

***- Любовь Никифоровна, çĕршыври укçа-тенкĕ, экономика йывăрлăхĕ станци ĕçĕнче те палăрать пулĕ?***

- Паллах. Чугун çулĕнче экономика енĕ кăна мар, çĕршывра мĕн пулса иртни пĕтĕмпех палăрать, мĕншĕн тесен вăл тĕп транспорт тата пассажирсем турттарассине тивĕçтерет. Производство чакни хурçă магистральсен турттарассин шайĕ чакнине пĕлтерет. Çавăнпа та ахальтен мар ĕнтĕ чугун çула экономика нерви теççĕ. Паллах, пирĕн патра та тиев турттарассин калăпăшĕ, ытти çулсемпе танлаштарсан, чылай чакрĕ. Тĕрĕс, пушатмалли халь те сахал мар ĕнтĕ, тиессин калăпăшĕ вара чылай чакрĕ. Халь эпир, тĕпрен илсен, вырăнти тиевсене ăсататпăр тата кĕтсе илетпĕр: перекетлес тĕллевпе чугун çул ертӳçисем поездсене урăх, инçерех çӳрекен участоксене куçарчĕç. Пирĕн станци 7 района тивĕçтерет, клиентсем те сахал мар, анчах та вĕсен парăм кунсерен ӳсет, хальхи вăхăт тĕлне вăл 6 миллион тенкĕ шутланать. Районти предприятисемпе организацисенчен пире нефть базипе сĕт-çу комбиначĕ çеç парăмра мар.

Чугун çул çинче пулса иртекен "рельс вăрçи" текенскер те пирĕн ĕçре начар енчен палăрать. Çапла, Челябинскри шахтерсем çула хупланă, унтан вара пирĕн пата вак чул тата ытти строительство материалĕсем килеççĕ вĕт.

***- Йывăр лару-тăрупран тухас тесе эсир мĕнле те пулин мерăсем йышăнатăр-и?***

- Май пур таран. Сăмахран, клиентсем тарифсем пирки ӳпкелешеççĕ. Эпир вара вĕсене пулăшас тесе тăрăшатпăр, ку ыйтупа район администрацийĕн пуçлăхĕ патĕнче те пулнă. Акă икĕ çул ĕнтĕ удобренисемпе çул-йĕр тумалли материалсем, тырă, çуламалли-сĕрмелли материалсем килеççĕ те вĕсене йӳнĕ тарифсемпе ăсататпăр. Малашне те, клиентсемпе пĕр чĕлхе тупăпăр тесе шутлатăп. Хальхи вăхăтра Раççей влаçĕн органĕсен шайĕнче МПСа, монополи пек акционер обществисене уйăрасси çинчен калаçаççĕ. Çакă тӳрре тухасса шанăç сахал. Сăмахран, пирĕн станцие кăна илер. Пирĕн пурĕ 13 участок шутланать. Вĕсем пурте пĕр-пĕринпе çыхăннă, централизациленĕ управление пăхăнса тăраççĕ. Çулсене уйăрни ĕçе тата та кăткăслатать, чылай ыйтусем кăларса тăратать, çавсене пула каллех клиентсемпе пассажирсем тертленĕç. Тепри, пире пăшăрхантараканни вăл - чугун çул çинчи лару-тăрăва закона хирĕçле ĕçсемпе пăсас тесе хăтланни. Çапла, вагонсенче е вокзалта сирпĕтекен устройство хунă тесе шăнкăравланисем те пысăк тăкак кăларттараççĕ тата сиен кӳреççĕ. Чăнах та, суйса шăнкăравлаççĕ ĕнтĕ, апла пулин те поезда чарса тĕрĕслеме тӳр килет. Çакăн пек пулăмсемпе кĕрешес тĕллевпе эпир хĕçпăшаллă хуралăн ятарлă службине йĕркелерĕмĕр.

***- Любовь Никифоровна, тиев турттарассин калăпăшĕ чакни коллектив çирĕплĕхĕнче мĕнле палăрчĕ. Ĕç вырăнĕсене кĕскетме шутламастăр-и?***

- Пирĕн коллективра хăйсен профессине парăннă, хăйсен пурнăçне чугун çулне, çынсене халалланăскерсем вăй хураççĕ. Хальхи вăхăт тĕлне пирĕн патра 220 яхăн çын ĕçлет, кусем вĕсем, тĕпрен илсен, пысăк квалификациллĕ, опытлă, ĕçре брак туман кадрсем. Шел пулин те, вĕсенчен 3-4 процентне кĕскетме тӳр килет.

***- Чугун çул вăл - халăха турттармалли тĕп меслет. Халь пассажирсем çителĕклĕ-и?***

- Вĕсен шучĕ çулсерен чакать. Маларах çу уйăхĕсенче чылайăшĕ кăнтăра каятчĕç, кăçал ку еннелле каякан пассажирсен шучĕ 20 процента яхăн чакрĕ. Сăлтавсенчен пĕри - хаксем пысăк пулни, тепри - çынсем темиçешер уйăх укçа илейменни.

***- Сирĕн патра, чугун çул çинче ĕç укçи тӳлес тĕлĕшпе ĕçсем мĕнле?***

- Ĕç укçине вăхăтлă параймастпăр пулин те, ăна тӳлесе татас ыйту пĕрремĕш вырăнта тăрать. Чугун çул ĕçченĕсен ĕçĕ питĕ яваплă, талăкри хăш вăхăтра та, уяв кунĕсенче те, канмалли кун та машинистсем çул çинче. Юсавçăсем те çанталăк условийĕсене пăхмасăр ĕçлемелле. Хальхи вăхăтра ĕç укçин калăпăшĕ вăй хунипе килĕшсе тăмасть: тĕслĕхрен, машинист 1000, 1200 тенкĕ, юсавçă вара 600 тенкĕрен те сахалрах илет.

***- Любовь Никифоровна, хăвăрăн професси уявне эсир тата сирĕн коллектив мĕнле кĕтсе илет?***

- Кăмăл пирки каламалли те çук пулĕ тетĕп: фанфарсен вăхăчĕсем тахçанах иртнĕ. Анчах та уяв уявах ĕнтĕ - ăна кашни ырра шанса кĕтет, çав шутра эпĕ те. Пурнăçăн 20 çулне ытла чугун çулне халалланă вĕт-ха, ку коллективпа йывăрлăхсене те, ĕçри çитĕнӳсен савăнăçне те чăтса ирттернĕ. Професси уявĕ вара коллектива тата та пиçĕхтерет, профессишĕн мăнкăмăлланассин туйăмне вăйлатать. Йывăрлăхсене пăхмасăр, эпир хамăрăн кăткăс та хисеплĕ вахтăра тăратпăр: тиевсем турттаратпăр, çулсем çĕнететпĕр, техника туянатпăр. Хальхи вăхăтра тавар кантурне газпа ăшăтма куçаратпăр, нумаях пулмасть 24 хваттерлĕ çурта хута ятăмăр. Район администрацийĕпе калаçса татăлса 90 хваттерлĕ çурта тума пуçлас тетпĕр, унта çурри чугун çул ĕçченĕсем валли пулĕ. Йывăрлăхсем ялан пулнă, татах та пулĕç, анчах та эпир оптимизма çухатмалла мар: хамăр мĕн пултарнине тумалла.

***- Любовь Никифоровна, интервьюшăн тавтапуç. Сире тата сирĕн коллективăра уяв ячĕпе саламлатпăр, ăнăçлăхсем, çирĕп сывлăх сунатпăр.***

**Ф.ЗИЯТДИНОВА.**



***Юрий Трофимычев - поездсен составителĕ. Вăл Нурлат станцийĕнчи чугун çул ĕçченесен çĕнĕ ăрăвĕн представителĕ. Кунта пурĕ виçĕ çул çеç вăй хурать пулин те, хăй тăрăшуллă та ăста ĕçчен тата специалист пулнине кăтартнă.***



**Çемье календарĕнчи дата**

# Юратупа ыркăмăллăх вучахĕ

Хăçан-тăр Эдита Пьеха репертуарĕн "Ачалăх хули"салхуллă юрринче çакăн пек сăмахсем те пурччĕ: "... ăçта-тăр хула пур, унта ăшă..."

Маншăн çакăн пек хула вăл Нурлат. Хамăрăн сулхăн картише, тăвансене, чугун çул шкулне, районти культура çуртне, перрон çинче уçăлса çӳренине аса илетĕп. Эпир поездсем çинче пыракансене ялан ăмсанаттăмăр, вĕсем часах инçетри пысăк хуласене çитĕç, теттĕмĕр эпир.

Халь эпĕ хам та пысăк та хитре хулара, Челябинскра пурăнатăп. Анчах та эпĕ хамăн ачалăхри хулапа тĕл пуласса чăтăмсăррăн, хумханса, савăнса кĕтетĕп. Нурлат хули, паллах ĕнтĕ, питĕ улшăнчĕ, анчах та ĕлĕкхи пекех ăшă хула: мана унта яланах савăнса, юратса кĕтеççĕ.

Çак хулара маншăн юратупа ăшă утравĕ пур. Эпĕ унта лексен хама пĕчĕк ача пекех туятăп, хамăн ачасем пысăккине пăхмасăр "хĕрĕм", "Галенька" теççĕ мана.

Паллах ĕнтĕ, ку вăл манăн тăван кил, унта манăн чи юратнă, хаклă аттепе анне - Исаак Львович Сандлер тата Клавдия Михайловна пурăнаççĕ.

Нумай çул каялла, 1948 çулхи июлĕн 31-мĕшĕнче вĕсем хăйсен чĕрисене пĕрлештернĕ те акă 50 çул ĕнтĕ пĕрле пурăнаççĕ.

Вĕсен пурнăçĕнче тĕрли пулнă - лайăххи те, начарри те, анчах та вĕсем юратăва яланах упранă. Эпир пĕчĕккĕренех хамăра юратнине туйса ӳснĕ, хамăра кăна та мар, тăвансене, кӳршĕсене, пĕлĕшсене те яланах тимлĕх уйăрнă, пулăшма тăрăшнă.

Анне пурнăçĕ тăршшĕпе кил-çурт ăсталăхне (ун чухне çак предмет çапла ятлăччĕ) вĕрентекен пулса ĕçленĕ, чугун çул поселокĕнчи нумай хĕрарăм шăпах унтан çĕлеме, тутлă апат пĕçерме вĕреннĕ. Хам та астăватăп, унăн урокĕсем час-часах пурнăç урокне çаврăнатчĕç, пурнăçри тĕрлĕ лару-тăрăва тишкереттĕмĕр, сĕнӳсем параттăмăр.

Анне тахçанах тивĕçлĕ канура ĕнтĕ, анчах та унăн оптимизмне, пурнăçа юратма хавхалантарнине хăш-пĕр çамрăк та ăмсанма пултарать.

Паллах ĕнтĕ, анне çумĕнче унăн шанчăклă тĕрекĕ - атте пулнă. Унăн юратăвĕ, пулăшăвĕ аннен пурнăçĕнче пысăк вырăн йышăнать. Аттен ялан обществăлла ĕçĕсем нумайччĕ, анчах та пире валли вăл ялан вăхăт тупатчĕ: кĕнекесем вуласа паратчĕ, шашкăлла выляттăмăрччĕ, çулла вара юханшыв хĕрне çӳреттĕмĕр.

Аттепе анне тахçанах ĕнтĕ кукаçейпе кукамай пулнă. Халь вĕсем мĕнпур юратăвне хăйсен виçĕ мăнукне параççĕ. Атте хăйĕн мăнукĕсемпе кăмăллăн, вăхăтне, вăйне шеллемесĕр, илĕртӳллĕн калаçнинчен е мĕн те пулин вĕрентме тăрăшнинчен яланах тĕлĕнетĕп. Вăл вĕсем валли тĕрлĕ конкурссем, вăйăсем йĕркелет, çаплах "Çăлтăрлă сехет" тата "Тĕлĕнтермĕш хирĕ" вăйăсене те, çĕнтерӳçĕсене чăн-чăн парнесем парать. Хăй тăрăшнипе йĕркеленĕ краеведени музейĕнче те вĕсем пурте пĕрле пĕр хутчен çеç мар пулнă. Музейри экспонатсем çинчен каласа панă чухне манăн ывăлăн куçĕсене курсанччĕ!

Аттепе анне пирĕн çинчен пурне те, лайăххине те, начаррине те пĕлсе тăраççĕ, канаш парса хальхи йывăр вăхăтра вара пурлăх енчен те пулăшма тăрăшаççĕ.

Эпир пĕр-пĕринчен аякра пурăнатпăр пулин те (пире пурнăç тĕрлĕ хуласене салатрĕ), санăн хуйхăна, савăнăçна ăнланакансем пурри вара питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ!

Хамăн юратнă аттепе аннене ылтăн туй ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп, вĕсене нумай çул хушши пĕрле пурăнма, хастарлăх тата çирĕп сывлăх сунатăп. Ан тив, аттепе анне çуртĕнчи ыркăмăллăх, юрату вучахĕ ĕмĕрех çунтăр.

**Галина Исааковна Хорошилова. (Сандлер).**

**Тăванĕсен архивĕнчи ӳкерчĕк (1951 ç.)**

*Православи уявĕсем*

# Сăваплă Илле пророкла калани

**Августăн 2-мĕшĕнче православи тĕнне ĕненекенсем Сăваплă Илле пророк кунне палăртаççĕ. Пирĕн хулашăн ку уйрăмах паллă кун: Нурлатра Илле пророк чиркĕвне уçнăранпа çулталăк çитет.**

Пирĕн хулара Линейная урамĕнче тата тепĕр чиркӳ пур, Серафим Саровскин храмĕ, унта та çынсем хапăлласах çӳреççĕ. Эпир, тĕне ĕненекен çынсем тĕн йăли-йĕркисене пăхăнакансем нумайлаииăшăн чун-чĕререн савăнатпăр. Тĕне кĕреççĕ, венчете тăраççĕ, вилнĕ çынна юрласа ăсатаççĕ. Илле пророк храмĕнче икĕ протоиерей - Леонидпа Анатолий, Серафим Саровски чиркĕвĕнче Николай Сиплатов протоиерей вăй хураççĕ. Чиркӳсене çӳрекенсем вĕсене хисеплеççĕ, юрataççĕ.



Пирĕн храмсене пулăшакансем чылай. Çапла акă икĕ прихут валли те просвирсем Любовь Андреевна Орешина пĕçерет. Ăна вăл пĕтĕмпех Турă йĕркипе, тăкаксене шута илмесĕр пурнăçлать. Икĕ прихут ятĕнчен те сире, Любовь Андреевна, пархатарлă ĕçĕршĕн тав тăватпăр. Тата эпир чиркĕве çӳрекенсен, икĕ прихутăн та чиркӳ совечĕсен ятĕнчен хулапа район администрацийĕн пуçлăхне Ф.С.Сибагатуллина православи тĕнне ĕненекенсемшĕн тăрăшнăшăн тав тăватпăр. Çак уявра çаплах аш-какай комбиначĕн, сахăр заводĕн ертӳçисене тата ыттисене манма юрамасть. Пысăк тав сире, сирĕн ĕçĕрсене Турă манмĕ.

**А.СПИРЧАГОВА.**
**Нурлат хули.**

**Елена АКСУСЕН**

*Тăван çĕршыв шăрши - вăл питĕ тутлă,*
*Ун сиплĕ шывĕ те - пылран та пылакрах.*
*Унти çынсен кашни чĕрийĕ вутлă,*
*Тырпул шăрши кĕрет кунта, паллах.*
*Шăнкăртатса юхать тăван çăлкуçăн шывĕ,*
*Кашни чĕрчун пăхать кунта куçран.*
*Аттен те, асаттен те çакăнта-çке килĕ,*
*Чун туртнă енĕм çакăнта-çке ман.*
*Тăван çĕршыв шăршийĕ питĕ тутлă,*
*Ун сиплĕ шывĕ те пылран пылак.*
*Унти çынсен кашнин чĕрийĕ вутлă,*
*Анне ăшши чуна туртать кунтах.*

** Уяв юррисем*

## Эпир каяс ачасем сар ача пулинччĕ

**Эпир çулас утисем**
**Шур ути пулинччĕ.**
**Çынсем çулас утисем**
**Аçа кикен пулинччĕ.**

**Эпир тăвас сарăсем**
**Хантăсла пулинччĕ.**
**Çынсем тăвас сарăсем**
**Хуралла пулинччĕ.**

**Эпир каяс ачасем**
**Сар ача пулинччĕ.**
**Çынсем каяс ачасем**
**Хура ача пулинччĕ.**

## Хир-хир урлă каçнă чух

**Хир-хир урлă каçнă чух**
**Çырма çинче пирĕн куç.**
**Вăрман урлă каçнă чух**
**Çырла çинче пирĕн куç.**

**Урам урлă каçнă чух**
**Йысна çинче пирĕн куç.**

**Пирĕн йысна кĕвĕçĕ -**
**Кĕвентепе хăвалать.**
**Пирĕн аппа йăпăлти**
**Вăрçсассăн та çаврăнать.**

**Пухса йĕркелекенĕ**
**Е.ИЛЮШКИНА.**

*** Чиперук тĕпелĕ**

### Çĕр çырлипе сĕтрен хатĕрленĕ мусс

Çĕр çырлине тасатăр, çăвăр та миксерпа нимĕр пуличчен вĕтетĕр, сахăрпа желатин хушнă сĕтпе (е хăймапа) лайăх хутăштарăр. Кашнине валли уйрăм пĕчĕк тирĕк çине ярăр та сивĕнме лартăр.

Ăна валли 400г сĕт (е хăйма), 250г тасатнă çĕр çырли, 4 апат кашăкĕ сахăр, 16г желатин кирлĕ.

### Чĕрĕ çырласенчен хатĕрленĕ суфле

Çĕр çырлине, хурăн çырлине нимĕр пуличчен вĕтетĕр, сахăрпа хутăштарăр та вут çине лартса хăйма пек çăраличчен вĕретĕр. Хатĕр нимĕре вĕриллех лайăх пăтратса кăпăшлантарнă çăмарта шуррипе асăрханса хутăштарăр. Çу сĕрнĕ çатмана е формăна хурса çине якатăр та духовкăна (е кăмакана) лартăр.

Ку суфлене хатĕрлеме 500г çырла, 200г сахăр песукĕ, 12 çăмарта шурри, 1,5 апат кашăкĕ çу кирлĕ.

### Тутлăлантарнă тăпăрчă кукли (сочни)



100г çемçетнĕ услам çу (е маргарин), 0,5 стакан сахăр песукĕ, 4 апат кашăкĕ хăйма, 1/4 чей кашăкĕ апат-çимĕç соди, 1,5-2 стакан çăнăх, пĕр çăмарта, 1/4 чей кашăкĕ тăвар ярса чуста çăрăр. Кукăль ăшне хума 200г тăпăрчă, пĕр апат кашăкĕ хăйма, сахăр, çăнăх тата пĕр çăмарта сарри ярса çăрса çемçетĕр. Пĕчĕк кукăльсем тăвăр та çиелтен çăмарта саррипе сĕрĕр. Кăмакара е духовкăра сараличчен тытăр.

# Пĕлтерӳсем

**Виçĕ пӳлĕмлĕ хваттере пĕр пӳлĕмлипе (хушса тӳлесе) улăштаратпăр е сутатпăр, хаклă мар. Адрес: Московская урамĕ, 5-45, 16 сехет хыççăн.**

* * *

**Цемент сутатпăр, леçсех паратпăр. Телефон: 2-28-18.**

* * *

**Участоклă, сарайсемлĕ пурăнмалли çурт сутăнать. Хуралту ялĕнче Блиновран ыйтса пĕлмелле.**

* * *

**Икĕ пӳлĕмлĕ хваттере улăштаратпăр (хушса тӳлесе) е сутатпăр. Гараж, 2 сарай, 2 пахча пур. Адрес: Советская урамĕ, 5-15.**

* * *

**Чистай хулинче çурт сутăнать. Нурлат хулинче 2-18-49 номерпе шăнкăравласа пĕлмелле.**

* * *

**Лайăх гараж сутăнать. Телефон: 5-26-39.**

* * *

**Тасатакан сооруженисем патĕнче гараж сутăнать. Адрес: Дружба урамĕ, 66-25. Телефон: 5-26-38.**

* * *

**Эсир туй тума, юбилей, çемье уявĕсем ирттерме пултаратăр, эпир тивĕçтернипе кăмăллă пулăр тесе шутлатпăр. Адрес: аэропорт çуртĕнчи ресторан.**

* * *

**ВАЗ-21074 сутатпăр. Телефон: 46-2-45.**

* * *

**1997 çулта туса кăларнă ВАЗ-21099 сутатпăр, "сапфир-металлик" тĕслĕ. Телефон: 2-10-94.**

* * *

**Икĕ пӳлĕмлĕ хваттере икĕ пĕр пӳлĕмлисемпе улăштаратпăр. Адрес: Циолковский урамĕ, 11-60, телефон: 2-17-76.**

* * *

**ВАЗ-2107 тата ВАЗ-2109 автомашинăсем сутатпăр, хаклă мар. Адрес: Московская урамĕ, 31-3.**

## Вĕренӳ центрĕ (Лениногорск хули) вĕрентме тытăнать:

**<u>августăн 3-мĕшĕнчен:</u>**
**- делопроизводитель тата кадрсен тĕлĕшпе ĕçлекен инспектор;**
**- хамăр çĕршывра тата чикĕ леш енче туса кăларнă пĕчĕк литражлă хурансем;**
**- парикмахер;**
**<u>августăн 10-мĕшĕнчен:</u>**
**- лифтсен ĕçне йĕркелессишĕн яваплă çын;**
**- газсене тишкерекен лаборант;**
**- автомобиль кранĕсен машинисчĕ;**
**- штукатур - маляр;**
**- платник;**
**- слесарь - сантехник;**
**<u>августăн 17-мĕшĕнчен:</u>**
**- машинист - трубоукладчик**
**- газ оборудованине ĕçлеттерекен тата юсакан слесарь;**
**<u>августăн 24-мĕшĕнчен:</u>**
**- тăварсăрлатакан тата шывсăрлатакан установкăсен операторĕ;**
**- тиев çĕклекен крансене юсакан слесарь.**
**Телефонсем: 2-34-45, 2-05-18.**

# Ертӳçĕсене пĕлсе тăма!

Тутарстан территорийĕнче вăйра тăракан закон тăрăх, тиевсене, пассажирсене тата сиенлĕ веществосене предприятисемпе организацисен автомобиль транспорчĕпе ятарлă ирĕк - лицензи илсен çеç турттарма юрать.

Август - сентябрь уйăхĕсенче Нурлат районĕнчи 190 ытла субъектăн Патшалăх транспорт инспекцийĕ транспортпа турттарма ирĕк панă лицензисен срокĕ тухать. Транспорт хатĕрĕсен хуçисен 30 проценчĕ ялсенче тавар туса илекенсем шутланаççĕ. Транспорт лицензийĕсене тӳлевсĕр параççĕ: хресченсемпе фермерсен хуçалăхĕсен ассоциацийĕсене, ял хуçалăх кооперативĕсене, Тутарстан Республикин ял хуçалăх продукчĕсен Министерствин ял хуçалăх продукчĕсем туса илекен тата ăна ĕçлесе хатĕрлекен ытти предприятийĕсене, бюджет тата культура организацийĕсене.

Çӳлерех палăртнă ĕçе лицензисĕр пурнăçласан ертӳçĕсене Раççей Федерацийĕн административлă йĕркене пăсни çинчен калакан Кодексĕн 157-3 статйипе тата Тутарстан Республики "Çулпа çӳремелли транспорта ĕçлеттермелли тата упрамалли, çулсемпе урам сечĕсене тата çулпа çӳрессине йĕркелекен техника хатĕрĕсене тытса тăмалли правилăсене пăснăшăн административлă яваплăх тыттарасси çинчен" йышăннă Законăн 16-мĕш статйипе килĕшӳллĕн административлă явап тыттараççĕ. 1998 çулта çеç çак статьясемпе хресченсен хуçалăхĕсен "Черемшан", "Кондурча", "Игенче", "Родина", "Заря", Муса Джалиль ячĕпе хисепленекен тата ытти ассоциацийĕсен ертӳçисене явап тыттарнă.

**Патшалăх транспорт инспекцийĕн Кама леш енчи уйрăмĕ.**



Р.ГИЛЬМУТДИНОВ фотоэтюдĕ.

## Çыран хĕрринче


Тĕп редактор Р.Ф.ЗАМАЛЕЕВ.
Редактор Т.И.БУРАЙКИНА.

Учредительсем: Нурлат районĕн администрацийĕпе редакцин ĕç коллективĕ

Хаçат эрнере виçĕ хутчен - юнкун, эрнекун, шăматкун тухать, вырăсла тата чăвашла тухать.

ПИРĔН АДРЕС: 423000, Нурлат хули, Карл Маркс урамĕ, 19.
ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор - 2-12-14, 2-22-81, редактор заместителĕ тата советсемпе обществăлла организацисен пурнăçĕн пайĕ - 2-10-44, редактор заместителĕ, яваплă секретарь - 2-18-67, редакторăн вырăс дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-14-16, редакторăн чăваш дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-10-44, ялхуçалăх пайĕ, промышленность, çырусемпе массăлла ĕç пайĕ - 2-22-51, бухгалтери, реклама пайĕ тата фотокорреспондент - 2-15-63.

Хаçата Тутар Республикин Информаципе пичет министерствинче шута илнĕ.

Регистрациленĕ номерĕ 34.

Димитровградская типография управления печати и информации Ульяновской области. Печать офсетная. Объем -1 печатный лист. Тираж 893. 3117